# Ӳркенмесен пурлăхлă пулăн



• А.Колесников, Н.Косычев, Б.Семенов /центр директорĕ/, С.Сошилова информаци кунĕнче.



• Залра.



• Ертсе пыракан специалист Н.Петрова.

**Канашри халăха ĕçпе тивĕçтерекен центр информаци кунне ку хутĕнче хулари тĕп библиотекăра ирттерчĕ. Ăна ĕçсĕр тăрса юлнă граждансене харпăр хăй бизнесне уçма пулăшас тĕллевпе йĕркеленĕ. Пулас предпринимательсене "Ӳркенмесен пурлăхлă пулăн" калаçура пĕчĕк предприяти уçма, бизнес-план тума вĕрентрĕç.**

**Канаш хулинчи халăха ĕçпе тивĕçтеркен центр директорĕ Б.Семенов, РФ Пенси фончĕн Чăваш Енри управленийĕн Канаш районĕнчи уйрăмĕн ертӳçи С.Сошилова, "Гражданское право" общество правленийĕн председателĕ-директорĕ Н.Косычев, "Аспект" вĕрентӳпе методика центрĕн директорĕн çумĕ А.Колесников, Раççей Налук службин Чăваш Республикинчи районсен хушшинчи 4-мĕш инспекцийĕн пайĕн пуçлăхĕ С.Ильина тата Г.Хорохорина предприниматель витĕмлĕ калаçрĕç, ырă канашсем сĕнчĕç. С.Гаврилов йĕркеленĕ автомобиль юсакан пĕчĕк предприяти опычĕпе те паллаштарчĕç.**

Б.Семенов каланă тăрăх, центр хăйĕн ĕçне 2007-2010 çулсенче Чăваш Енри халăха ĕçпе тивĕçтерес, 2009 çулта хушма пулăшу кӳрес программăсемпе килĕшӳллĕн пурнăçлать. Çак тĕллевпе влаç органĕсемпе, предприяти ертӳçисемпе, вĕрентӳ тата общество организацийĕсемпе, массăллă информаци хатĕрĕсемпе тачă çыхăну тытать. Халăха ĕçпе тивĕçтерессине лайăхлатас тĕллевпе тĕрлĕ мелпе усă курать: штата кĕскетнĕрен организацирен кайма тивнисене патшалăх шучĕпе вырăнтах вăхăтлăх ĕç тупса парать, социаллă хӳтлĕх кирлисене общество ĕçне явăçтарать, алла çĕнĕ специальноç илме е професси квалификацине ӳстерме пулăшать, çамрăк специалистсене стажировкăна ярать, харпăр хăй бизнесне уçма пулăшу кӳрет, ваканси ярмăрккисем йĕркелет.

2009 çулхи юпа уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне Канаш тăрăхĕнче ĕçсĕр юлнă 1173 çынна /2,12%/ регистрациленĕ. Пĕлтĕрхи çак вăхăтринчен 611 çын ытларах. Сăлтавĕ – экономика кризисĕ ĕç рынокне витĕм кӳни. Кăрлач-авăн уйăхĕсенче центрти специалистсенчен 8625 çын пулăшу-канаш илнĕ. 4342-шне ĕç шыракансен ушкăнне йышăннă /иртнĕ çулхи çак вăхăтринчен 1932 çын нумайрах/. Хĕрарăмсем йышлă – 55,6%, çамрăксем – 23,5%. Тепĕр кăтарту та шухăша ярать: организацирен хăйсен ирĕкĕпе кайнисем – 47,4%, предприяти хупăннипе е штат кĕскетнипе – 21,7%.

Кăçалхи 9 уйăхра 2830 çынна ĕç тупса панă. Ку – регистрациленĕ йышăн 65,2 проценчĕ /2008 çулта – 76,1%/. 1439 çыннăн кăмăлне вунă кунрах тивĕçтернĕ. Патшалăх пулăшăвĕпе 14-18 çулсенчи 570 çамрăк вăхăтлăх ĕçре пулнă. Вĕсенчен 472-шĕ ялтан, ытларахăшĕ – нумай ачалла çемьерен.

Маларах асăннă тапхăрта центр специалисчĕсем 1293 çынна общество ĕçне явăçтарнă, 886-шĕ ăна хушма пулăшу программипе тупнă.

Центр ытти регионпа та тачă çыхăну тытать, 120 çынна республика тулашĕнче яланлăх тата вăхăтлăх ĕç вырăнĕ тупса панă. Вĕсем Мускав, Воронеж, Волгоград облаçĕсемпе Саха /Якут/ Республикинче строительство тата хуçалăх организацийĕсенче вăй хураççĕ. 258 гражданина /шута илнĕ йышăн 9,2 проценчĕ/ професси квалификацине ӳстерме тата иккĕмĕш специальноç илме пулăшнă. Вĕренме янисен ушкăнĕнче хĕрарăмсем – 64%, 16-19 çулсенчи çамрăксем – 70,2%.

Ĕçсĕррисене харпăр хăй бизнесне уçма пулăшасси ăнăçать: 85-шĕ консультаци илнĕ, 15-шĕ пĕчĕк предприяти йĕркеленĕ.

Ĕç паракансем 9 уйăхра 5689 ваканси сĕннĕ /88,8 проценчĕ – рабочи профессийĕ/. 2008 çулхи юпа уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне пĕр вакансие вăтамран 0,74 çын тивĕçнĕ, кăçал – 3,4. Кăрлач-авăн уйăхĕсенче 2793 çынна ĕçсĕрлĕх пособийĕпе тивĕçтернĕ.

С.Сошилова харпăр хăй бизнесне уçакан предпринимателĕн, фермерăн, нотариусăн, адвокатăн, детективăн Пенси фондĕнче регистрациленмелли йĕрке пирки каласа панă. Кунта шута илнĕ хыççăн вĕсен пенси страховани взносĕ тӳлемелле /вăл кăçал 7274,4 тенкĕпе танлашать/. Организацире тара тытнă çын пулсан уншăн та взнос хывмалла, килĕшӳ çырмалла.

С.Ильина налук органĕнче регистрациленмелли йĕрке пирки чарăнса тăчĕ. Гражданин предприниматель пуласшăн-и е организаци йĕркелесшĕн-и – малтан тĕплĕн шухăшлатăр. Организаци йĕркелекен регистрациленнĕ хыççăн хăй ячĕпе унта пурлăхне хывать. Предприяти панкрута тухсан, парăма тавăрмалла пулсан вăл хăйĕннипе татăлать. Унăн учредитель пурлăхне тĕкĕнме ирĕк çук. Предприниматель панкрута тухнине суд çирĕплетсен унăн пĕтĕмпех хăйĕн тӳлеме тивет. Хваттерпе машинине те туртса илме пултараççĕ.

Центрăн ертсе пыракан специалисчĕ Н.Петрова ĕçе вырнаçмалли, предпринимателĕн пирвайхи утăмĕнчи тĕслĕхсемпе, харпăр хăй бизнесне уçма субсиди илмелли йĕркесемпе паллаштарчĕ.

Г.Хорохорина предпринимательи каласа панине те кăсăкланса итлерĕç. Вăл малтан центрта ĕçсĕррисен шутĕнче тăнă. Бизнес-план туса хатĕрленĕ, ăна шанчăклă хӳтĕленĕ. Пурнăçа кĕртме 58800 тенкĕ субсиди илнĕ, усă курнă япаласем сутакан лавкка уçнă. "Малтан ĕç ăнăçлă пымарĕ, тупăш çукчĕ. Апла пулин те кулянмарăм. Майĕпен çынсем паллакан пулчĕç. Хăйсен япалисене лавккана пырса пама тытăнчĕç", – терĕ вăл залра ларакансене хавхалантарса.

Ĕçсĕр тăрса юлнă кашни çын çак ыйтупа тĕл пулать: пурлăха малашне ӳстерес тесен тара кĕрĕшсе ĕçлемелле-и е предприниматель пулмалла-и? Харпăр хăй бизнесне уçма кăмăл тунă граждансен центртан пулăшу ыйтмалла. Специалистсем калаçу ирттерĕç, тест йĕркелĕç, норматив докуменчĕсене кăтартĕç, хăш отрасле суйласа илнине кура сĕнӳсем парĕç, бизнес-план тума пулăшĕç.

**Михаил ИВАНОВ.**